# КАРТТИН ВЫСТТĂВККИНТЕ.

Пайан высттăвккăна кĕрсе куртăмăр. Ку ҫăваш хутошнĕкĕсен пĕрĕмĕш высттăвкки. Высттăвккăна кĕрсе, пăхса, ҫавăрăнса тухсан, пуҫа ҫакăн пек шухăшсем капланса кĕреҫҫĕ:

Совет ирĕкĕпе ҫăвашсен респуплĕкĕ вăйланса, тĕреклененсе пыраҫ. Вăл кăна мар, ҫăваш ҫĕлхи те ӳсет илемленет. Ăна ĕлĕк ҫăмланă пулсан та—халĕ унăн хуна вăрман пек ҫамрăк литтературĕ ӳссе хăпарат. ҫăваш сăн-сăпаҫĕ... Ăна ĕлĕк хуратнă пулсан та—халĕ вăл хăйĕн илемĕпе ытти халăхсен хушшинҫе ҫыслă выран йышăнса тăраҫ.

Ҫăваш ĕҫхалăхĕн ҫĕрĕ вăйĕ сӳнмен, пăҫланса ларман, вăл ҫухалман. Унăн творҫҫĕствăллă пултарăвĕ аталанма тытăннă. Хăшĕ-пĕри высттăвкка тиркекенĕ те тупăнаҫ. Высттăвккă наҫар, карттинсем нумай мар, хутошнĕксем сахал, вĕсен пултарăвĕ ҫухăн, теҫҫĕ.

Ҫук, вăл тĕрĕс мар. Высттăвккă лайăх. Ăна пĕр иккĕленмесĕр каламалла. Карттинсем сахалтарах та, анҫах вĕсенҫен ҫылайĕшне Мускаври высттăвккăна суйласа йаман пулсан, вĕсем кунта нумайтарах пулнă пулĕҫҫĕҫ.

* * *

Акă пăхса ҫаврăнарха высттăвккăна.

Малтанхи витринă умне пырса тăратпăр. Кунта шăлтах Ф. Лаврентйĕв хутошнĕкĕн карттинĕсем. Мĕн пурĕ—13 карттин. Карттинсем нумайах мар пулсан та ҫавах кунта хутошнĕкĕн творҫҫĕствăллă пултарăвĕ лайăх палăрса тăраҫ. Ф. Лаврентйĕвăн фантгаҫи пысăк («Ҫĕмĕрӳ»), поеҫи тарăн («Хумсем ҫинҫе») Вăл лирикка хутошнĕкĕ («Таҫҫă»), наттуралисăма йуратаҫ вăл («Атăл хĕррипҫе»). Анҫах вăл ҫылайах импреҫҫионисăм йеннелле те сулăнаҫ («Шупашкар ҫиркĕвĕсеҫ»). Кунта вăл йапаланне мĕнле курăннинҫен ытларах мĕнле туйăннине кăтартма тăрăшаҫ. Авă—ҫирĕк шурă, анҫах хĕвел анăҫнелле хирĕҫ пăхнипе, вăл катаран кăваккăн туйăнаҫ. Ҫавăн пирки Ф. Лаврентйев ҫирĕке ҫылайах кăвакартса ӳкерет.

Илер ĕнтĕ уйрăм карттинсене.

(«Хумсем ҫинҫе»)—тинĕс пырĕ. Тинĕс вăйла. Тинĕс хумханаҫ. Ҫамрăксем ҫавах тинĕсрен хăрамаҫҫĕ. Вăсем кимпе ишсе, савăнса, йурăсем йурласа, тинĕс хумĕсене хирĕҫ касса-ҫурса пыраҫҫĕ. Ех, харсăр та иккĕн ҫамрăк вăйсем!

«Ҫĕмĕрӳ». Ку карттина хĕшĕ-пĕри тăнланаймаҫҫĕ. Мĕне пĕлтерет вăл? теҫҫĕ. Мана тӳрех Тион Рит кĕнеки аса килет. «Тĕнҫене ҫĕтретнĕ 10 кун». Ҫавна пĕлтермести вара «Ҫĕмĕрӳ»? Пинер калашле: «кивви ҫĕмĕрлет». Ҫăнах кунта кивĕ тĕнҫе ҫĕмĕрлет. Вăл ишĕлет. Вăл ҫунаҫ. Ҫавна кăтартнă кунта хутошнĕк. Ҫавăнпа кунта сăрсем тĕлĕнмелле ҫакăр: ҫулăм сикнине пăхсан, куҫ шарса кайаҫ. Итлесен: кунта тĕрлĕ сасă шăхăрни, шавлани, ӳлени хăлхана' ҫураҫ. Ҫăнах та кив тĕнҫе ҫавăн пек кисренсе, ҫĕмĕрĕлсе, ҫунса анҫĕ. Кив тĕнҫене ылханса ҫырнă ҫак карттина. Ҫавна ҫухлас пулаҫ.

«Шупашкар ҫиркĕвĕсем». Ку карттинсем ҫинҫе хутошнĕк клас пусмăрĕпе натси пусмăрĕ ҫинҫе йĕрĕнсе шухăшлани тĕплĕ палăраҫ. Ҫак икĕ вĕҫлĕ пусмăр ҫăваш ĕҫхалăхĕн пуҫмимине тĕн сĕрĕмĕпе питĕ нумай аркашҫарнă. Ҫавăнпа Шупашкарта ҫиркӳсем нумай туса тултарнă. Анҫах, халĕ тен хĕвелĕ анма тытăннă. Ҫавăнпа ҫиркӳсен киревсĕр кĕлеткисем хĕвел анăҫне хирĕҫ каваккăн-кăваккăн курăнса лараҫҫĕ.

* * *

Малалла М. Ҫпиритонăв карттинĕсем катаранах куҫа илĕртсе курăнса тăраҫҫĕ. Ҫун туртнă кăмăҫне вĕсен умне пырса тăратпăр. Мĕн пурĕ 17 карттин. Икĕ пысăк витринă йышăннă. Ҫавăрăнса пăхсан, кунтах тата М. Ҫпиритонăвăн муҫейе панă експонатсем пур. Вĕсем тата тепĕр витринă йышăннă. Мĕн пурĕ 16 карттин. Муҫейри експонатсем ҫинҫен епĕр кунта ҫыраймăпăр, мĕншĕн тесен вĕсем высттăвккăра шутланмаҫҫĕ. Тата вăсем ҫинҫен «Сунталра» (№ 10) хутошнĕк Литвиненкă тĕрĕс ҫырса пĕлтернĕ.

Пирĕн малтанах ҫакна пĕлес килет: ăҫта, мĕнле йапаласем ҫине ҫак М. Ҫпиритонăв хутошнĕкĕн куҫĕсем ытларах тăрăннă? Ыйтнине хирĕҫ ҫапла каламалла: кунта талккипех ҫăваш ĕҫхалăхĕ, унăн пурăнăҫĕ, ҫуртйĕрĕ, таврашĕ, сăнсăпаҫĕ, йăлисем...' Кунта ҫăваш ĕҫхалăхне етнокрафи йенҫен ӳкернĕ. М. Ҫпиритонăв етнокрафи хутошнĕкĕ. Ҫавăнпа ăна тишкĕрӳлеме урăх йенҫен ҫул тупса пырас пулаҫ.

Ĕмĕртенпех самана ҫавнашкал пыраҫ: пĕр-пĕр халах, йе унăн тĕп класĕ исгори ҫулĕ ҫинелле тухма пуҫласан, вара вăл халăх хăйĕн ҫинҫен историне палла йапаласем хăварма тытăнаҫ. Хастарлă хутошнĕксем ун пек тапранăва сисмесĕр тăрса йулма пултараймаҫҫĕ. Вĕсем ун пек ҫухне халăхăн сăнсăпатне, унăн пурăнăҫне, йăлисене, тавраш не — карттин ҫине ӳкерме тытăнаҫҫĕ. Авалхи крексен Фитийпе Пракситтĕл скуҫпитăрсем ҫавăн пек пулнă. Иттаҫйантсăсен—Миккел Аншеллăпа Рафаеҫ хутошнĕксем. Нитерлантсăсен (коллантсăсен)—Рупĕнс хутошнĕк. Вырăссен — Клинккă компоҫиттăр ҫавăн пек пулнă.

Пирĕн хутошнĕксем хушшинҫе ун пекки пурши, йе ҫукши? Пур пулсан вара камши вăл? М. Ҫпиритонăва етнокрафи хутошнĕкĕ терĕмĕр. Вăл етнокрафи хутошнĕкĕ анҫах пулсан та, ҫапах ăна ҫав аслă картишнеллех кĕртмелле. Ăна унта кĕртме пĕр хапăл тунипех Рафаельпе йе Рупĕнспа таплаштарма никам та шухăшламаҫ. Вĕсем ытла та уйрăм вырăнта тăраҫҫĕ. Вĕсем пирĕн хутошнĕксем мар, пирĕн ĕмĕрте ĕҫленĕскерсем мар, талантсем те вĕсен урăх виҫере. М. Ҫпиритонăва урăх йенҫен хакла хурас пулаҫ. Ăна урах мелпе пахалас пулаҫ. Вăл — пирĕн хутошнĕк. Вăл хăйĕн вирлĕ куҫĕсемпе ҫăваш ĕҫхалăхĕн ҫĕрĕшывĕ ҫине пикенсе пăхма хапăл тунă. Вăл ҫăвашан пурăнăҫне сăн ҫине ӳкерме тытăннă. Вăл хăйĕн талантне, хăйĕн вĕреннĕ искуствине йут ҫĕрте сапаласа сайа йама шутламан. Куккăҫ хутошнĕк те питĕ ҫапла хутошнĕк. Ăна пĕтĕм Раҫҫейĕпех те пĕлеҫҫĕ пулас. Анҫах вăл хăй ҫуралса ӳснĕ ҫĕршыва манса йут ҫĕрте ҫапланса пурăнаҫ. Ун карттинĕсем ҫинҫе пĕрре те ҫăвашăн сăнĕ ҫук. Вара мĕнтен паллă унăн ҫăваш хутошнĕкĕн уссийĕ? Нимрен те паллă мар. Куккăҫ хутошнĕк пирĕн мар. М. Ҫпиритонăв ҫăваш ĕҫхалăхĕн хутошнĕкĕ. Ҫакăнта унăн пахийĕ, унăн ҫапĕ. Ҫакăнтах та унăн меслеҫĕ.

М. Спиритонăва халех аслă хутошнĕксемпе танаштарма иртерех. Анҫах, вăл хăйĕн ĕҫне ҫапах ĕҫлет. Пысăк ĕҫ пĕҫĕкрен пуҫланса пыраҫ. Малтанах мĕн-мĕн

ӳкерессине те ђылай ђухлас пулаЙ. Сӑрсене те йӳрӑхлисене шыраса тупас пулаЙ. Вӑл ҫӑмӑл ӗҫ мар. Вӑл технӗк ҫинђе анђах тӑмасЙ. Мӗншен тесен пирӗн ђӑваш искусстви халиђђен пулманпа пӗрех. Ҫавӑнпа М. Ҫпиритонӑв ҫав йапаласене пикенсе шыраЙ. Вӑл вӗсене шырани пирӗн куҫ умӗнђэ тӑраЙ

Акӑ илӗпӗр М. Ҫпиритонӑвӑн малтанхи (1918-1921 ҫ.) карттинӗсене—„Ҫуркунне“, „Хӗрлӗ плошђӑтри миттӗнкӑ“, „Ҫӑпата тӑвакан“. Ку карттинсем ҫинђе сӑрсем тӗксӗмрех. Сывлӑш та ҫӑмӑлах темелле мар. Анђах малалла (1921—1924 ҫ.) сӑрсем улшӑнса хитреленсе пыраҫҫӗ. Сывлӑш та уҫӑрах. Ҫавӑн пек: «Станок хушшинђе», «Вуђах умӗнђе», „Пахђа ӗҫӗсем“, «Нурӑс пасарӗ» т. ы. Йулашки ҫулсенђе (1924—1927 ҫ.) колорит ђеђекленсе илемленет. Сӑрсем виттӗр курӑнма пуҫлаҫҫӗ. Ҫавӑн пек: „Ђӑваш хӗрӗ“, «Канашра ҫуркунне», „Суха тӑвакан“, „Тырӑ выракансем“, «Сакс», «ОкЙапронӑксем» т. ыт. Выстӑвкка уҫсан ӳкерсе хӑварнӑ „Шӑпӑрҫӑ“ карттинӑра стил те ђылай улшаннӑ. Малтанах стил кӑшт хытӑклӑрахђӗ, йккатемӗксен йевӗрлӗђђӗ, хађ—йакарах, ҫемҫерех, хӑйӗн манерӗпе куҫ ҫуттине ађашлаЙ.

М. Ҫпиритонӑв малашне тата паттӑрланассине кӗтме шанђӑк хуратпӑр.

* * *

Ытти хутошнӗксем—К. Ваҫҫилйӗв, К. Танилӑв, В. Мођђалов, В. Нефетйӗв, Л. Пођаккова, К. Пођакков хӑйсен карттинӗсене выстӑвкка тӑратнӑ.

К. Ваҫҫилйӗвӑн «Автопортрет» авантарах. Пейсашсем илемлӗ. М.-Кошкински патретне каснӑ лартнӑ темеллех мар. К. Ваҫҫилйӗв реалист.

К. Танилӑвӑн сӑрсем таса, виттӗр курӑнаҫҫӗ. „Атӑл ҫинђе“ кантӑк витнӗ пек йалтӑртатаЙ. «Хӗр вӑрлани» кӑштах ҫитеймен пек туйӑнаЙ. „Комсолккӑ“ аван, К. Танилӑвӑн стил уйрӑмрах тӑраЙ. Хутошнӗк ытла та щӑлса йакатса ҫыраЙ. Мусӑк искуствинђе ун пек стиле «хорађнӑй» йе «ђиркӳ» стилӗ теҫҫӗ.

В. Мођђаловӑн „Куланай“ шухӑш йенђен аван. Куланай инкек-синкек ӗлӗк ђӑнахах ҫавнашкал пулнӑ ӗнтӗ: вӑл хресђене ӗнесӗр, лашасӑр хӑварма пултарнӑ. Анђах карттинра кӑлтӑксем те ҫителӗклех пур. Вӑл акӑ ҫакӑнтан паллӑ. Карттинри ҫынсен кӗлеткисене ђун кӳртсе ђӗртсе йарас пулсан, вӑсем ђӑнахах ђӗрӗ пулса пирӗн хушшӑмӑрта ҫӳрес пулсан, епӗр акӑ ҫакна курӑттӑмӑрђђӗ: пӗрин пуҫӗ пысӑкрах пулӗђђӗ, теприн хӑрах алли вӑрӑмрах пулӗђђӗ, йе тата унта-кунта туса пӗтермен ҫитменлӗх вырӑнсем пулӗђђӗҫ. В. Мођђалов хӑйне хӑй вӗреннӗ хутошнӗк (сӑмаудђкӑ).

В. Нефетйӗвӑн карттинсем ђылай, пурӗ 18. Ку хутошнӗкӗн ҫут-ҫанталӑкри тӗрлӗ йапаласем (найЙурморт) аван тухаҫҫӗ. Ҫавӑн пек «Васӑри ђеђексем». Пейсашсем те илемлӗ, тӗслӗрен: „Пахђари ђеђексем“. «Ђӑваша улталакан улпут» шухӑш йенђен аван. В. Нефетйӗв наттуралисӑм йеннелле сулӑнаЙ.

Л. Пођаккова майра хутошнӗк. Сӑрсене илемлӗ хураЙ. «Йурварсем» ҫинђе хӑйар хађ тин пахђаран татса тухнӑ пекех шурӑ тарилкке ҫинђе ђӗрӗ выртаЙ. К. Пођакков—плаккат йеннелле сулӑлаЙ. «Ђӑваш хоровођӗ» лайӑх. Анђах ђӑваш хӗрӗсем вӑййа ытла тӗслӗрен кӗпесем тӑхӑнса тухнӑ. Кунта анатйенђи ђӑвашсем те, мал йенђисем те пур пек. Апла пулати?

Йулашкинђен К. Ҫпиритонӑвӑн скуљпгӑрлӑ мамалисем (тӑмран тунӑ кӗлеткесем) ҫинђен тата унӑн архитектурӑллӑ пройекђӗ ҫинђен пӗрик сӑмах.

К. Ҫпиритонӑв—пӗртен пӗр ђӑваш скуљптӑрӗ. Вӑл тӑмран, лепастӑртан тата кипсӑран мамалесем туса ђӑваш пурӑнӑҫне кӑтартасшӑн. Ҫулла Атӑл хӗрне канма тухакансем пурте ӗнтӗ Ҫтаппан Раҫӗн памӗтнӗкне курнӑ. Вӑл памӗтнӗк ҫинђи лепастӑртан тунӑ парељйев—Ҫтаппан Раҫӗн пуҫӗ. Ҫав парелйев К. Ҫпиритонӑв ӗҫӗ. Халӗ К. Ҫпиритонӑв выстӑвкка икӗ ейЙут илсе килсе тӑратнӑ: «Комсомолккӑ», тата «Шӑпӑрҫӑ». Сахалтарах та, уншӑн та ерехмет: ӗҫе пӗлсе тунӑ, ђӑваш сӑнне кӗртнӗ.

К. Ҫпиритонӑвӑн архитектуралла пройекђӗ ҫӗн архитектурӑ ҫулӗ ҫине пусайман вара. Ун пек ҫурта тума кирпӗђ вырӑнсӑр нумай кирлӗ. Ҫтенисем сарлака та хулӑн, кантӑкӗсем пӗђӗккӗ. Сулахай йенђи фассатра анђах пиљастӑрсем (тӑваткал пӗрене йевӗрлӗ ђул йупасем) палӑрма пуҫлаҫҫӗ. Ђӑвашла ӗрешлӳ ҫук. Стил кивӗ.

Кусемпе выстӑвккӑ пӗтет. Ҫырас пулсан тата та ҫырмалла та, халӗ ҫитӗ, унсӑрӑн кунта вырӑн ҫитмӗ. Анђах йулашкинђен выстӑвккӑ ҫинђен мӗн калӑпӑр? Хурламаллаи выстӑвкка? Ҫук, хурлама пултараймастпӑр. Тиркесен пыл та йӳҫӗ пулӗ, анђах тиркени тӗрӗс пуљмӗ. Выстӑвккӑ лайӑх. Малалла ђӑвашсен шивӑпиҫлӗ искуству тата вӑйланасса кӗтетпӗр. Ђӑвашла шивӑппӗҫ ђаплӑ вырӑн йышӑнасса шанатпӑр.

**Ф. Павлӑв.**